# ОКŤАПӖР СУЛӖ




3826

ВАҪАНККА (ШАЛАНКӐ)

№-3826

ВАÇАНККА (ШАЛАНКĂ)

# ОКТĂПĔР ÇУЛĔ

ЙУРĂ-СĂВĂСЕМ

ÇĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1931

Отпечатано в тип. № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

Уполном. Чувашглавлита № 1103 Заказ № 2313. Тираж 5000 экз.

# ЙУРĂСЕМ

## ОКТĂПЕР ÇУЛĔ.

А. Песыменски сăвви
тăрăх çырнă.

Утсаттăмăр епĕр,
 Ыйтсаттăмăр çăкăр.
Ĕçе те илмеççĕ,
Ђĕнсе те ђĕнмеççĕ.
Çунат
Тыткăнри пек
Хыпкăђланнă кăкăр.
Анђах,
 Кармашсан та,
Ырлăхсем кĕмеççĕ.

 Хăрушăђђĕ.
 Йăвăрђђĕ.
  Кам ђăттăр?
Ђăтса çав,
 Тӳссе çав, çавах.
Анђах, пурнăçа
Йан-йанратрĕ,
 Вăратрĕ
Нăй-нăй кăшкăрса çех
 Хусканнă сасах.

Ех, ЛЕНИН!
Вуђах ђĕртсе патăн
  Пире ес.
Вăйхăват вĕрсе кӳртрĕн
 Ĕççын ђĕрине.
Ăнлантăмăр, Ленин:

Каларӑн ҫӑнне—
Хӗҫпӑшал тытмаллах!..
Ӗнтмелле!..
— Пӑшал!..—
Терӗн те...
Кӗрӗс-с!.. кӗрӗслетрӗ,
Йанрарӗ тӗнҫе.
Ҫапла ирӗк кусрӗ,
Ҫӑкӑр пирӗнте.
Ҫапла туртса илнӗ
Ирӗк ӗҫхӗвелӗ
Нихҫан сӳнес ҫук—
Вӑл пырӗ ӗмӗре.

Хаҫ пусрӑмӑр епӗр,
Ех, ҫамрӑк та паттӑр.
Кунҫулӑмӑр ҫапӗ—
Ҫул ҫапӗ—
Октӑпӗр.
Октӑпӗр—йыхравҫӑ,
Вӑл ирӗк хӗвелӗ,
Пӑлхав ӗҫ ҫулпуҫӗ
Сӳнми ҪУТ ЙУПА.

Вӑл—
Хапрӑкпала
Уйхирсенӗн телейӗ.
Октӑпӗр вӑл—
йурӑ,
ӗҫхумӗ,
уйав.
Йалавӗ те,
ҫап та
Пулас ҫут тӗнҫенӗн
Октӑпӗр,
комунӑ,
ЛЕНИН.

1927 ҫ.

# АСЛӐ ОКТӐПЁР.

Ҫамрӑксен маршӗ.
Вырӑсларан куҫарнӑ.

Хамрӑн ирӗк тӑван ҫӗршывсенҫе
Ирӗклӗх й уррисем йурлатпӑр,
Ҫут хӗвел пек Октӑпӗр ырлӑхне
Ӑхаљ мар епӗр хаљ мухтатпӑр.

Пурте: Йалпала хапрӑк
Аҫисем пӗрле
Епӗр, епӗр.
Шӑлсах та
Тасататпӑр пусмӑра
Хамӑрӑн аслӑ
Октӑпӗрпе.

Вунӑ ҫул пирӗн влаҫ, пирӗн ирӗк—
Пирӗн ҫире патша ҫук, сӑнҫӑр ҫук.
Вунӑ ҫул тулнине уйавлатпӑр,
Анҫах, хаклӑ Илйиҫ пирӗнпе ҫук.
Йалпала хапрӑк...

Хуласемпе йалсем тӑванланҫӗҫ,
Пӗр-пӗрне ал парса ал илеҫҫӗ.
Тинӗссем леш йенҫи ҫурасем те
Йулашки ҫапӑҫӑва ҫӗнеҫҫӗ.
Йалпала хапрӑк...

Ҫӗн йалав, ҫӗн йыхрав, ӗмӗтсем пӗр.
Ҫамрӑксем ҫӗннӗ сас – йун кӑвар:
— Тӗнҫипех ӗҫҫынни пӗрлешер те,
Пур ҫӗрте те Октӑпӗр тӑвар!..
Йалпала хапрӑк...

Хамрӑн ирӗк тӑван ҫӗршывсенҫе
Ирӗклӗх йуррисем йурлатпӑр.

Çуг хěвел пек Октăпěр ырлăхне
Ахалђ мар епěр халђ мухтатпăр.

Ўсетпěр йалпа
Хапрăк ађисем
Епěр, епěр.
Çапсах та
Салататпăр мăшкăла
Хамăрăн
Аслă Октăпěрпе.

1927 ç.

## ЛЕНИН.

(Ђăваш хěрěсен йурри).

Сат пахђинђи сар кайăк
Йан йанратса йурларě;
Манăн савни комсомолěс
Ленин çинђен каларě: } 2 хут.

Çěнě пурнăç çулпуçě—
Ленин çинђен вěренер.
Ленин вилђě пулин те
Хăй вăл пирěн ђěререх.

Хěлěн-çăвěн вěçрен-вěç
Мускав хули йанăрат,
Ленин çивђě сăмаххи
Тěнђе тавра çаврăнат.

„Кăмака турђки“ хěрарăм,
Çын вырăнђе пулман ес.
Халě, Ленин кăтартнă пек
Çěнě пурнăç тăван ес.

Кив пурнăçа ватмашкăн
Пěђђен пулат, теттěре?

Алла-аллăн тытмашкăн
Пире Ленин вĕрентрĕ.

Карталаннă кайăк-хур
Ăшă йенне çул тытаť;
Ĕçлекенпе хĕресђен
Ленин çулĕпе утаť“.

Хĕрлĕ хăмађ тутăрĕ
Мана питĕ килĕшрĕ,
Ленин çинђен калани
Ђĕре тĕпнех вырнаçрĕ.

Хĕлĕн-çăвĕн вĕçрен-вĕç
Мускав хули йанăраť.
Ленинăн ђăн сăмаххи
Тĕнђе тавра çаврăнаť.

Ђăн тӳпере пин çăлтăр,
Пин çăлтăр та пĕр хĕвел;
Тĕнђипеле пин ăс пур,
Пин ăс пур та, пĕр Ленин.

1927 çул.

## КИЛМЕН-КУРМАН ШУПАШКАРНЕ.

(Хресђен активис йурри).

Килмен те курман Шупашкарне
Кăçал килсе ай куртăмăр,
Тĕп хулара пултăмăр.
Тавай та йурлар йуррине те
Çĕн самана йухăмне.

Килессе килтĕм еп ĕçпеле—
Колхос çинђен ай калаçма,
Канаш ыйтма, ăс пухма:

Акрăмунсен портфĕлĕнҫе
Нумай пусу шырама.

Кугман та пĕлмен ҫуттине те,
Електритсăн стантсине те
Пĕтĕм кĕрсе куртăмăр.
Ҫĕнĕ хресҫен ҫуртĕнҫе те
Токлатра та пултăмăр.

Хресҫен те ҫурҫĕ, ҫĕнĕ ҫурҫĕ,
Виҫĕ те хутлă пысăк ҫурҫĕ—
Хула илем хăй кўрет:
Кĕриҫҫен кĕме пелес ҫук,
Кĕрсен, тухас килес ҫук.

Ҫилне кўлер, теҫҫĕ, шывне ĕҫ сĕнеҫҫĕ,
Сывлăшра та рати хумĕсем...
Тата мĕн-мĕн тумĕҫши?
Трактăр тенĕ ҫўрен утне
Кўлсе кайса пулмĕ-ши?

Унта та кунта акрăмунсем—
Ҫутă та куҫлăх портфĕллисем
Канаш туса лараҫҫĕ:
Токлат, теҫĕс... апла-капла...
Параппанне ҫапаҫҫĕ.

Ай-хай та, йулташ акрăмунсем,
Манăн ыйтас, пĕлес килет:
Ҫак сăмах та ҫăн мар-и?
Теҫĕс купи портфĕлне те
Касă айне тăвас мар-и?

Касă айне тунă портфĕлĕнҫен,
Касă айĕнҫи теҫĕссенҫен
Ленин калҫи тухатех.
Ленин калҫи хухĕм ўсет,
Колхос тымар йаратех.

Акрӑмунсем „тӗрӗс“ терӗҫ.
Ах, ҫак пирӗн йалӗнҙе те
Електритсӑ ҫутасҙӗ;
Тепре хула килсессӗн те
Трактӑр кӳлсех кайасҙӗ.

Килмен те курман Шупашкарне,
Нумай пусу ҫулне-йӗрне
Тинех ҫитсе тупрӑмӑр.
Курман та илтмен пурнӑҫне те,
Пурӑнса-туса курӑпӑр.

1929 ҫ.

## ЕЙ-НУ, ЙАРА ПАР!..

Хресҙен йурри.

Кӑвак шуҫӑм ҫуттипех
Ҫӳрен утпа иксӗмӗр
Ват асаттен сухине } 2 хут.
Каллех алла илтӗмӗр.
Ей-ну, йара пар
Суха-касси хӗррипе,
Хуллен-хуллен ута пар, } 2 хут.
Ана тӑрӑх кайа пар.
Тӳсех, лашам, ҙипер пыр,
Сӗтӗр ватӑ суханах:
Шуратайса хварӑпӑр
Хытӑ типшӗм анана.
Ей-ну, йара пар
Суха-касси хӗррипе,
Хуллен-хуллен ута пар,
Ана тӑрӑх кайа пар.
Хӗвел ҫӳле хӑпарать,
Ирхи апат ҫывхарать;
Пирӗн ани ҫав-ҫавах
Суха-пуҫне парӑнмасть.
Ей-ну, йара пар
Суха-касси хӗррипе,

Хуллен-хуллен ута пар,
Ана тăрăх кайа пар.
Çанçурăмсем лаҕкам шыв...
Ех, виç пусу, кив суха...
Текех сире шансассăн
Тар тăкни те сапланмĕ.
Ей-ну, йара пар
Суха-касси хĕррипе,
Хуллен-хуллен ута пар,
Ана тăрăх кайа пар.
Тĕшмĕшлĕхе пуç тайса
Çак нуштана куратпăр;
Акрăмунсем хушшинҕен
Упаран хыт хăратпăр.
Ей-ну, йара пар
Суха-касси хĕррипе;
Хуллен-хуллен ута пар,
Ана тăрăх кайа пар.
Çитет кун ҕул ҕăтнипе,
Колхосшăн ал çĕклетпĕр;
Килес çулсем плуксемпе
Трактăрсемпе ĕçлетпĕр.
Ей-ну, тăрлаттар
Кăвак тĕтĕм кăларса,
Калăпăшпех сухалар
Йăрансене тĕп туса.
Йулашки çул ҕăтатпăр
Колхос-совхос тăвиҕҕен,
Тӳс, тӳс, лашам, тӳс, лашам,
Трактăр илсе килиҕҕен
Ей ну, йара пар
Суха-касси хĕррипе,
Хуллен-хуллен ута пар,
Ана тăрăх кайа пар.

1929 ç.

# КОЛХОС ЙУРРИ.

Пирĕн униҫе шĕшкĕлĕх (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Мăйăр татма кайар-и?
Кутĕнҫен ҫатан авари те,
Тăрĕнҫен милĕк хуҫар-и?

Пирĕн усравсем хурăнлăх (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Милĕк касма кайар-и?
Кутĕнҫен йĕке ҫаврар-и те,
Тăрĕнҫен милĕк ҫыхар-и?

Пирĕн анисем сĕткенсĕр (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Атăр колхос тăвар-и?
Нумай пусса куҫар-и те,
Тымар ҫимĕҫ акар-и?

Пирĕн лашисем ырхан-ҫке (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Акса утă тăвар и,
Виккă, ӳхлĕм, ҫавка пуҫне
Уйа-хире акар-и?

Пирĕн суха-пуҫ кивелҫĕ (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Колхос туса пĕрлешер.
Плукă-трактăр илĕпĕр те,
Кив сухана пĕтерер.

Пирĕн ĕнисем вĕтĕ-ҫке (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Ăратлă выҫăх туйанар,
Сĕт-ҫу йулташлăхĕсенҫе
Тулăх сĕт-ҫу тăвăпăр.

Пирĕн ђăххи те йалкулли,
Кăлăкласси çех ун йăлли,
Ай-хай, тантăшсем,
Ђăн-ђăн ђăхсем кўрер-и?
Ђăх-ђĕп сойус уçари те,
Инкупаттăр илер и?

Пирĕн çĕрсем пит тăвăр (2 хут).
Ай-хай, тантăшсем,
Урăх ĕç те тупар-и?
Хапрăк-савăт лартар-и те,
Пролеттари пулар-и?

Пирĕн йалĕсем пит тĕттĕм.
Мăкăрланаť йўç тĕтĕм
Ай-хай, тантăшсем,
Сăмакуна пĕтерер;
Ĕçке путнă ĕçлĕ çынне
Кĕнђелертен сирпĕтер.

Епĕр хамăр вăйсăр мар,
Ĕçрен хăрас çынсем мар.
Ай-хай, тантăшсем,
Униђерен тухар-и?
Аťăр колхос тăвари те,
Електритсă çутар-и?

1929 ç.

---

## СОВЕТ ИРĔКĔШĔН.

(„За власть советов“ кĕввипе).

Итлеха, рапођђи: шур пантă путлантăр,
Ĕçе пăрахар та, хĕçпăшал тытатпăр.
Пурсăмăр кар-р! тăрса
Вăрçма тухатпăр,
Совет ирĕкĕшĕн
Вилме те хатĕр. } (2 хут).

Итле, ĕçхресђенĕ: „Вăрçа!“ тет ĕççарĕ,
Плукна тирпейле те, вăрçа хатĕрех тăр.
Пурсăмăр...
Раççей патшан мар хаљ, Совет ђăмăртанђĕ,
Ăна шурă пантă аркатса тăкасшăн.
Пурсăмăр...
Епĕр ахлатмастпăр, хăраса ўкместпĕр,
Пирĕн пурнăç хакĕ—ирĕкшĕн кĕрешес ĕç.
Пурсăмăр...
Акă оккопсем, йанраç пулеметсем,
Çапах шикленмеççĕ совет паттăрĕсем.
Пурсăмăр...
Акă аттаккă, çурлаççĕ снаретсем,
Анђах снаретсем те хăратсах пăрахаймĕç.
Пурсăмăр...

1925-мĕш çул куçарнă.

## ПРИКАТĂ ХАТĔР...

(Çав кĕвĕпех)

Итлеха, рапођђи, прорыв-мĕн ан пултăр,
Аťăр, кар тăрар та, плана тултаратпăр.

Пурте: Пурсăмăр кар тăрса
Тимлетпĕр, аťăр;
Плана тултармашкăн
Прикатă хатĕр. } 2 хут.

Итлеха, колхоçнĕк, утах ес патварăн,
Суха-пуçне вилĕм, трактăрсем тăватпăр.
Пурсăмăр...
Итлеха, утарнĕк, пĕр харăс тухатпăр,
Планра «пилĕк çуллăх», тăваттăра тăватпăр.
Пурсăмăр...

Асăрхаттарни: Ку йурă кĕввине пурте пĕлеççĕ. Ăна „ђĕрĕ хаçат, „кăвак кипке“ вăййине кăтартнă ђухне йурласа пама çăмал. Кашнă претприйаттире, кашнă колхосра хăйсене май, «Итле, пеђђатнĕк», «Итле, копператтăр», т. ыт. теме те йураť. Претприйатти çинђен: «Прорыв пирĕн пите пысăк» Ал-улт прођђăн тулнă, çĕрĕшпех тăватпăр» тесе хăйсен ўсĕмпе çитменлĕхсене кăтартса, хушса йурлани усăллăрах та, интереслĕрех те пулаť. Çавăн пек тума сĕнетĕп.

# КОЛХОС АЂИСЕМ.

(Колхоçнĕксен йурри*).

И, пĕлĕт те йухаť, пĕлĕт йухаť,
Савăт çинђи çавра тĕтĕм пек.
Колхос ађисем (2 хут)
Йурлаť савăнса.

И, ĕмĕр те çитрĕ, ĕмĕр çитрĕ
Ленин алли çырса хунă пек.
Колхос ађисем
Йурлаť савăнса.

Савăт çинђе пирĕн хура тĕтĕм,
Кăкăрĕсем унăн хурçăран.
Колхос ађисем
Йурлаť савăнса.

Уй-хирĕмĕр, савăн, колхос, савăн:
Савăтпала есĕ курнăçсам.
Колхос ађисем
Кайаť савăта.

Хирĕмĕрти шевли, хирти шевли—
Темшĕн вăлă пайан тунсăхлă?
Колхос ађисем
Йурлаť савăнса.

Савăтăмăр сисрĕ, савăт сисрĕ—
Трактăрсăр шет ăна тунсăхлă.
Колхос ађисем
Йурлаť савăнса.

Колхосăмăр тусĕ—хурçă савăт
Трактăр лартсах килђĕ хуларан.
Колхос ађисем
Йурлаť савăнса

*) Ку сăвва В П. Воропйов мусăк çине хунă, Тĕп ђăваш хорĕ малтанхи 9 куплетне çеç йурлаť.

Маттур хурçă каҫҫă, паттăр каҫҫă
Савнă тусне вăлă манас çук.
Колхос аҫисем
Ёçлет трактăрпа.

И пĕлĕт те йухаť, пурнăç йухаť
Ленин алли çырса хунă пек.
Ленин аҫисем
Епĕр колхосра.

(Йурланă хушăра хусса каламалли).

Аслă çулпа килет хĕрлĕ упус
Тимĕр кăвак уҫĕ—çулпусĕ
Хўрипеле çилхи пасарнă.
Шет йăвăр пулнă тăр çул тытасси.
Çапах паттăр уҫĕ, усмасť те пуçне.

(Хор йурлаť).

Колхос аҫисем
Йурлаť савăнса.

Хĕрлĕ упус пуçĕ—колхос пуçĕ,
Тăнлав çинҫи çўçĕ шуралнă,
Шет çăмăл та пулман колхос пуçласси,
Çапах утаť вунçиҫ çулхи пек.
Колхос аҫисем
Йурлаť савăнса.

Йуртакан ыр утран ай мĕн йулаť?
Мĕн ҫул çул çўрени ай çав йулаť.
Пирĕн çамрăклăхран ай мĕн йулаť?
Мĕн ёçлени-туни ай çав йулаť.
Ленин аҫисем
Епĕр колхосра.

(Хор пуçлаť)

Епĕр шăрататпăр...
**Трактăр!** Хурçă утсем,
Компайăнсем
**Тырпул хапрăкĕ!** кўлсе çўреме

Колхос аҫисем
Йурлаӑ саванса.

(Вуласа каламалли.)

Хура вӑрманта халӗ мӗн тӑваҫҫӗ?
Хурамаран пӗкӗ аваҫҫӗ.
Кулаксемпе халӗ мӗн тӑваҫҫӗ?
Ӗмӗрлӗхе... авса хураҫҫӗ.
Савӑт аҫисем
Ӗҫлет колхосра.

Ӗнтӗ хирти хытнӑ хыт хурийӗ

**Нуккӑ!**

Тасал пирӗн колхос хирӗнҫен.
Ӗнтӗ ес те, ҫиркӳ—пуп туррийӗ.

**Нуккӑ!**

Тасал пирӗн те ҫакӑ ҫӗр ҫинҫен.
Колхос аҫисем
Йурлаӑ саванса

(Йурласа)

И пӗлӗт те йухаӑ, пӗлӗт йухаӑ
Савӑт ҫинҫи хура тӗтӗм пек;
Колхос аҫисем
Йурлаӑ саванса.

И тӑватпӑр пурнӑҫ, ҫӑн та пурнӑҫ
Ленин алли ҫырса хунӑ пек.
Ленин аҫисем
Епӗр колхосра.

Шупашкар. 1930 ҫ.

---

*) **Трактӑр, Тырпул хапрӑкӗ** тенисене хор йурланӑ хушӑра хыттӑн кӑшкӑрса каламалла.

**Нуккӑ** тенине пӗтӗм хорпа, йурлама ҫаранса тӑрсах хыттӑн харӑссӑн кӑшкӑрса каламалла.

**Ҫыраканӗ.**

# СИРӖН ÇИРЕ ЙУНКШТУРМ.

(Çамрӑк колхоçнӗксен йурри).

— Сирӗн çире йункштурм пит килӗшет,
Те КИМ паллине те ай çакнӑран.

„Йанту" колхос аҕи пит килӗшет,
Те колхосне пӗрле ай тунӑран.

Атӑрах та кайар, ӑçта кайар?
Колхос ҕиттаљнине атӑр кайар.

Колхос ҕиттаљнинҕе ай мӗн тӑвар?
Савни токлат тӑват, сӳтсе йавар.

Ӗлӗк савӑтсенҕе тар ма йухнӑ?
Мӑнтӑр хырӑмсемшӗн ай вӑл йухнӑ.

Совет савӑтӗнҕе хаљ кам хуçа?
Пӗтӗм ӗçхалӑхӗ унта хуçа.

Совет çӗршывӗнҕи ӗçҕен хресҕен,
Ушкӑнлӑх, машшинлӑх... ҕӗртсе ӗçлен.

Ӑмӑртӑва тухса ай ӗçлер-и—
Ӗçӗн ӳсӗмлӗхне ай çӗклер-и?

* * *

Патшанӑн салтакӗ пулан тесен,
Вӗри куççуљ ӑшнех кӗрсе ӳкен.

Хӗрлӗ те салтак пулан тесен,
Хавас çунатсемпех вӗçсе ӳкен.

* * *

Пуçӑмӑрсем тулли хӗрлӗ çӗлӗк,
Хӗрлӗ çӗлӗксем мар—хӗрлӗ йалав.

Хӗрлӗ мӑйçиххисем ӗлӗк—тӗлӗк,
Сырса илейрӗçӗ халӗ йала!

Тăрийех те йурлаŤ, тăри йурлаŤ,
Тăхăр пуссипелех йан-йан! йараŤ.

Пионерсен йурри ай йанăраŤ,
Тăхăр колхосĕпех йан-йан! йараŤ.

Çамрăк ленинтсăсен мĕн тет отрег?
Илйиђĕнпе пĕр тет—çулне-йĕрне.

Епĕ колхосне те ай ма кĕреп?
Колхосăнне пĕлеп çулне-йĕрне.

Çĕнкорăм та саншăн ай мĕн хаклă?
Паттăр отрет кађђи пулни хаклă.

Совет çĕршывĕнђе ай мĕн хаклă?
Ушкăн хуçалăхсем ай пит хаклă.

— Пирĕн çире йункштурм пит килĕшет—
КИМ паллийĕсем те ай çакнăран.

Колхоçнĕксен йурри пит килĕшет,
Колхосне те пĕрле ай тунăран.

* * *

Хура вăрманта халĕ мĕн тăваççĕ?
Хурамаран пĕкĕ ай тăваççĕ.

Кулаксемпе халĕ мĕн тăваççĕ?
Ĕмĕрлĕхе... авса ай хураççĕ.

Мĕншĕн хирти ерĕм тĕл-тĕл вĕçет?
Сивĕ кунсем, еллĕ, çывхарђĕç-и?

Мĕншĕн, тетĕн, пуйан ай çĕтĕлет?
Ĕмĕрĕсем, еллĕ, çывхарђĕç-и?

Ерĕмсем те пĕђђĕр, хыт хура та,
Çум курăкĕ толой! ай ĕмĕрлĕх!

Йумăçсем те пĕђђĕр, пуп-мулла та,
Йал кулакĕ толой! ай ĕмĕрлĕх!..

# КАЙ, КАЙ ИВАНА...

Кай, кай Ивана!..
Ма каймастăн Ивана?
Унтан лайăх пуйан каҫҫă
Йалта тупаймастăн.

Сар кайăк ма пултăм,
Турат ҫине ма лартăм?..
Анне мана кайăк тесе
Ивана сутасшăн.

Йал, йал йаланах
Пуҫ тайаҫҫĕ Ивана,
Йал кулакне пуҫҫапмасăр
Пурăнма та ҫук пек.

Пан, пан, пан-улми,
Пан-улмийех пултăм та,
Ырҫын сĕтел ҫине леҫме
Урăх сĕтел ҫук пек.

Кай, кай темесен те
Хам та кайма пĕлетĕп,
Мана саваť, мана илет
Йалти комсомолĕс.

Шуҫăм ҫутти килнĕ ҫух
Сар кайăксем йурлаҫҫĕ;
Ҫĕнĕ пурнăҫ тунă ҫух та
Акă ҫапла калаҫҫĕ.

Кай, кай Хусана
Тесе калăр Ивана,
Ҫехсемпеле пĕр пулса
Кайнăҫҫĕ вăл Хусана.

Комсомолĕс Хĕветĕр,
Ҫунăм савнă Хĕветĕр,
Анне, ҫавнах кайатăп—
Ҫунăм ҫавнах йуратаť.

# ИНÇЕТРЕ, ИНÇЕТРЕ...

(Вырăс хресҫен йуррисен кĕнекинҫен).

Инçетре, инçетре—
Шав-шавлан хуларан,
Ҫукун çулсенҫен те
Катара, катара...
Вĕçĕмсĕр-хĕрисĕр
Хир выртаť сарăлса,
Темшĕнçке çеçен хир
Путнă тарăн шухăша?

Мĕншĕн-ши, çеçен хир,
Путрăн тарăн шухăша?
Ма манран пытаран
Ес вăрттăн шухăшна?
— Епĕ, еп,—терĕ хир,
Ĕмĕтре пулманнех
Кўрнĕ Ленин çинҫен
Шухăшлап кулленех...

Сăмаххи ун ҫăнне
Пĕлнĕренпе вун çул,
Хайар хум çапнипе
Уçăлҫĕ çĕнĕ çул.
Тĕнҫипе пĕр пулса,
Çак çула тухмалла.
Вăл кăтартнă çулпа
Малалла!.. Малалла!..

Ленин! Ленин! тени
Тĕнҫипех илтĕнет;
Вăл аса килнипе
Уй-хир те çўçенет.
Илемрен илемлĕ
Ҫеҫексем çурăлаť.
Курман илтмен ĕçсем
Тĕнҫене курăнаť.

# СОВЕТ УЛМИ.

(Ликпунктра вĕренекен хĕрсен йурри).

„Ай, улми“... кĕввипе.

Улми шултра, улми тутлă
Çĕнкас колхос пахђинђе;
Унтан тутлă пин-пин хут та
Тутанмалли хут çинђе.

Пурте: Ай, Совет улмине
Ўстермесĕр ђăтас çук;
Хаљ Совет çĕрĕнђе
Хут пĕлмесĕр йулас çук.

Йалтăр-йалтăр курнаканĕ
Атăл шывĕ мар-ши вăл?
Пур ырлăха параканĕ
Совет влаçĕ мар-ши вăл?

Ай, Совет...

Анлă Атăл шывĕ-шурĕ
Улăхран улăха сарăлђĕ;
Совет панă çутăлăхĕ
Йалтан йала сарăлђĕ.

Ай, Совет...

Вунă улăх утине те
Кăçал çулса савăнни;
Вун çул ĕнтĕ Советпеле
Пурăнса курса савăнни.

Ай, Совет...

Тăвăр ђăваш ани çинђех
Тăхăр пусă ўсет-çке,
Тĕпел кукри кĕл-вуђахнех
Совет çутти ўкет-çке.

Ай, Совет...

Хĕрлĕ хăмаç йалавне те
Тытса пăхман йал та çук,
Пирĕн çамрăк ђĕеррере те
Сулхăн тытма вырăн çук.

Ай, Совет...

Тĕпел кукрийĕсенђен те
Колхосалла çул хурар.
Тухар тĕшмĕш çăмхинђен те,
Тĕттĕмлĕхе тĕп тăвар.

Ай, Совет...

1927 ç.

## КОМСОМОЛККĂ АЛТАŤŤИ.

(„Ех, Дуня"... кĕввипе).

Пирĕн Аљŭук ђеђек пек,
Хĕрлĕ тутри хĕвел пек.

*Хушса йурлачалли:*

Ех! Аŭљук, ђипер Алтаŭŭи,
Комунăрах ĕçлери.

Алтаŭŭийĕн ĕç нумай,
Ĕçлеме те вăй пур-ха.

Ех! Аљŭук...

Ĕлкĕрет вăл шăртлама,
Ал çитет ун арлама.

Ех, Аљŭук...

Çил-тăман та лăр та мар,
Аљŭук çŭрет нартома.

Ех, Аљŭук...

Хĕрарăмсене пухаť—
Вулаť кĕнеке-хаçат.

Ех, Аљŭук...

Ак Аљŭука çураçма
Пыђĕ кулак хăтана:

Ех, Аљŭук...

— Аљŭук, кĕнекӳне пăрах,
Пйан туăвăп унсăрах.

Ех, Аљŭук...

Пуйан арăмĕ пулсан—
Пыл пек йухĕ пурнăç сан.

Ех, Аљŭук...

Кулса йађĕ Алтаťťи—
Çапла пулђĕ халлаппи:

Ех! кулак - йал йытти
Сана тухмĕ Алтаťťи.

Йал кулакĕ, куштанĕ—
Комсомолăн тăшманĕ.

Ех, Аљŭук...

Йан-йанах кай инçене,
Йуррăм, çутă тĕнђене.

Ех! Аљŭук, ђипер Алтаťťи,
Комунăрах ĕçлери.

---

*) Ку йурра вырăсларан куçарса çырнă. Малтан „Ех, Аљŭук, Атаťťи, комсомолра ĕçлери“ тенĕђђĕ. „Волонťŏор“ комунăра ăна халĕ çырнă пек хушса йурлама пуçларĕç.

# ХАҪАТ ҪУТТИ.

(Пионерсен маршӗ)

Пӗр ҫулталăк, шăп ҫулталăк
Октапрйонăк пирӗнпе:
Йарри уҫрӗ, уҫрӗ алăк
Хаҫатăмăр пионер...

Кайăк-хур пек карталанăр,—
Калстăкланăр пурсăр та.
Урам тăрăх... параппанлăр,
Йан-йан! йурра туртăр та.

Пăтти-патти! параппансăр
Те йурлани, те утни?...
Ҫамрăк ҫаршăн, паттăр ҫаршăн
Хаҫат ҫутти—ҙи ҫутти.

Атăр, угăр—клупсем тулҙҙăр—
Пайанхи кун савăнар,
Ăш хӗвеллӗн ăшшăн култăр
„Ҫамрăк хресҙен“ йупиҙар.

Ей! Пиҙҙемӗр—комсомолӗс,
Пайан ес те... ут пӗрле,
Ленинранах ҙӗртсе йулнăҫ
Ҙӗремӗрти вут-хӗмне.

Кăват хурăр, вӗретер-ха
„Ҫамрăк хресҙен“ хуранне,
Ҫӗн йал тума вӗренер-ха,—
Ан нăйках тек, кур, анне!

Хаҫат тăрăх темтепӗр-ҫке
Вӗренет сан Елеҫук—
Сирӗн пек тек пионерсем
Виҫ пусса та шеллес ҫук.

Хут-купăс та ни-кӗт, ни-кӗт!..
Параппанӗ пат-пат-пат!..

„Çамрăк хресҫен“ сыв пул! тетпĕр
Пурте харăс пĕр саспа.

Шăп çулталăк, пĕр çулталăк
Октапрйонăк пирĕнпе,
Çакăр ăна хĕрлĕ калстăк,
Сарăлтăр вăл пин-пинпе!..

---

## ҪЕҪЕН ҪУНСЕМ.

(Пионерсен йурри).

Епир-- йупах ҫеҫен ҫунсем,
Выҫәр, кулар çурхи кунсем,
Çурхи кунсем çут кĕмешке
Йăл-йăл! хĕвел ытамĕнҫе.

Çурхи ҫеҫен ҫеҫекмĕре
Çил сив куçпах пăхайас çук,
Йем-йешĕлех çерем çине
Кĕртсем, пăрсем вăл сарас çук.

Шур хут çинҫе куç-пуçăмăр—
Вăй-халлăмăр та ҫăп-ҫăмăр.
Пĕр-пĕрĕннех сиксе тухса
Çĕршер пин ҫун пирĕнпе утаť.

Ҫăн-ҫăн телей, ҫăн савăнăç:
Кунçул илем—ыр пурăнăç.
Инçет кунтах ишсе килет,
Кивелес çук пирте тивлет.

Ăш çуркунне... çап çут хĕвел.
Ех, ĕмĕтĕм! Çĕклен! çĕнел!
Телей умрах шевлен выҫаť.
КИМ—Ленин çарĕ ўссех пыраť.

Хастарлăнах выҫар, кулар;
Пурнăç çине çĕн тум утар:
— Хаҫ, çамрăк ҫух утма васкас,
Ҫăн савăнса, ҫăн пурăнас!

1926 ç.

# ЛАПЂĂК ПŸРТРЕ-И...

(„Гей, берлинцы"... кĕввипе йурлама пулаť).

Лапђăк пўртре-и, катмар савăтра-и,—
Пур çĕрте те çак сас йанăраť:
— Ей, тухăр, тухăр, мĕн пур пек утарнĕк,
Пилĕк çуллăх план ак ĕçе йăхăраť.

Ўсет, пиçет те вăй-халăмăр,
Пирте халĕ хĕвел хăнара.
Тĕп çул пĕрре çеç—выљатмăпăр,
Хурçăлатнă пире Ленин Йупара.

Ирсĕрлĕхе веç турар та тăкар-и,
Çивђĕ хĕçпăшал пур:—Перес! Йанратас.
Ей, тухăр, тухăр, мĕн пур пек ĕç çарĕ,
Пĕтĕм тĕнђипех пĕр Совет тăвас.

Ўсет, пиçет те вăй-халăмăр,
Пирте хĕвел халĕ хăнара.
Тĕп çул пĕрре çеç—выљатмăпăр,
Хурçăлатнă пире Ленин Йупара.

Пурнăç пулсан пултăр—савăнăçлă ĕç.
Çĕн пурнăç могторĕ хаљ пирĕн ђĕре.
Ей, тухăр, тухăр, прикатăн-прикатăн
Утарлă туптатпăр çула-йĕре.

Ўсет, пиçет те вăй-халăмăр,
Пирте хĕвел халĕ хăнара.
Тĕп çул пĕрре çеç—выљатмăпăр,
Хурçăлатнă пире Ленин Йупара.

## ÇИЛТĂВĂЛ.

Кăш-кăш-кăш-ш!—кашлаť
Сĕм хура вăрман,
Çӳç-пуçне тăмалаť
Çĕр çулхи йуман:
Тăвăл çĕкленет—
Сисет манăн ђун,
Кăлт-калтах сикет,
Вĕрет вĕри йун...

Хăлтăртатрĕ-çке
Çанталăк урапи,
Кусса кайрĕ вăл уй-хирсем тăрăх...
Пĕшкĕнсе илет есрел хурами,
Шартлатаť кăна хăрăк туратти.
— Шартлатах, хуçăл! Кăклансах ывтăн!
Ак ĕмĕт, шухăш- -тăвăл çунатти
Шартах çапса хуçрĕ те, хайаррăн
Вакласа ывăтрĕ самана кашгине.
Çанталăк урнă халђ, тустараť тĕнђене.

Кăш-кăш-кăш-ш!—кашлаť
Сĕм хура вăрман,
Çӳçенсе лараť
Мĕн пур пек йуман:
— Тăвăл ак çĕкленђĕ,
Çĕкленђĕ тусан;
Те вут тем тивертнĕ?
Тĕтĕм... çил çунаť.

Çитрĕ те çапрĕ, çĕкленӡĕ хайарлăх!
Тăвăл урапи çиçсе çиттĕрĕ...
Пытанаймăн есĕ, харамлăх,
Тăвăлпа есрел тытăçса ӳкрĕçĕ,
Кисренет тĕнӡе, çĕмерлет, пăтранать,
Хурама тĕлĕнӡе тем ӡăлт-ӡалт!—çуталать
Кĕр-рĕс!—кĕрĕслетрĕ типнĕ тар пиӡки,
Лаштах персе анӡĕ хĕн-хур хурами.
Çулăм çулса илӡĕ есрелĕн тымарне—
Пĕрхĕнӡĕ çиçĕмĕн вут-хĕм йĕппи,
Пĕрӡĕн-пĕрӡĕнех çитсе сăхрĕ вăл
Ӡĕренӡеллĕ пӳрт-çуртсен ӡĕрине.

Кăш-кăш-кăш-ш!—кашлать
Сĕм хура вăрман,
Çипуçне шăлать
Хай патмар йуман.
—Илтĕрсем, пĕлĕр,
Хунав йумансем,
Ӡухласа илĕр
Тăвăл йумахне.

Тăвăл ку çуралӡĕ хула хушшинӡе,
(Илтмен мар епĕр мăрйе сассине—
Темиçе тапхăр та вăл ӡĕнӡĕ тăвăла).
Тарпала ĕç ĕмкĕӡне, çав сасса ĕмсе
Çитĕнӡĕ тăвăл хĕн-хур айĕнӡе
Акă ун парни, куратпăр пурте:
Сиксе туххăрĕ паттăр йуланут,
Тăрăст! та, тăрăст!—пусать уӡĕ-урхамах.
Çилхере йалав: çурла-мăлатук,
„Ирĕк" йатлă вăл, çак ут урхамах.

Вăшăл-вăшш! Вăш-вăш-ш!—
Вăрман вăшлатать,
Тăвăл аӡине
Ирĕке асăнать.

# ЛЕНИНА АСĂНСА.

(Кĕскетнĕ сăвă).

— Вилҫĕ, терĕç, Ленин,
Ленин пирĕнпе мар!—
Вут-хĕмĕн те çиçĕмĕн
Сарăлҫĕ хыпар.

Пысăк та-çке хуйхă,
Хуйхăллă хыпар...
Ҫĕремĕрсем —вут-хĕм,
Шухăш—шĕл кăвар.

Те татăлҫĕ тевĕрш,
Те ӳкрĕ лаши?
Тӳннĕ пек те туйăнҫĕ
Пурнăç урапи,

Вилҫĕ, теççĕ, Ленин,
Ленин пирĕнпе мар!
Пин çĕрлĕ вĕçейрĕ
Ратио хыпар.

Те ĕнтĕ йĕрес хаҌ,
Те тăкас куççуҌ?
Каскалаŏ, хĕсет ман
Ҫĕреме вут ҫуҌ.

Çук!
Тевĕршĕ татăлман,
Шертешнĕк те çĕнĕ,
Мĕн пур тавраш çирĕп
Çĕнетнĕ урапан.

Çук!
Укес çук пирĕн лаши
Ӳксессĕн те вилмĕ;

Вăлă халĕ ăс,
Ăспа тунă пăс—
Електритсăллă
Тилĕ

Кăмăл—сывлăша! тетĕр—
Хатĕр йероплан,
Шыв ҫинђе—карапĕ,
Ҫĕрте—паравос.

Ĕҫхалăхĕ хăтăлђĕ,
Тухрĕ тамăкран,
Ҫĕн ҫĕре ҫул тытрĕ
Ҫĕнĕ паравос.

Анђах...
Пайан хуйхă,
Хуйхăллă хыпар:
Паттăр рулевой-ха,
Ленин пирĕнпе мар,
Тăкăнаť куҫҫулĕ,
Ђарма ҫăмăл мар:

Пĕр сӳннĕ ђĕре вăл
Текех тапас ҫук,
Пиншерĕн вĕрсе те
Ăна ђĕртес ҫук.

Ҫапах та ҫухалмĕ
Ленинсăр та ҫул;
Рулевойсăр лармĕ
Ленин лартнă шкул.

Пиншер пинĕн тухрĕҫĕ,
Руљҫă... кăђђекарĕ,
Комун йенне вĕҫрĕ
Пурнăҫ паравосĕ.

# ПУЙĂС КИЛНИ.

(«Выçлăх çул» поемă сыпăкĕ).

Акă пĕр пуйăс Мускавран тухса
Хусан йенелле кустарђĕ кăна.
Тапхăрăн вăл, хыттăн: пăрăнма хушса,
Йан-йан! кăшкăрат хулăмрах саспа.

Вăрнар вăрманĕ ун сасне туйрĕ
(Тĕрĕс ăсатма шухăшлат пулас),
Стантси те паçрах алăкне уçрĕ:
— Манăн та хăнана хирĕçех тухас!..

*
* *

Ахаљ ђух темле, лăпкă сасласкер,
Хаљ вăрман хĕрсе хашлатма пуçларĕ,
Мĕн пур йеннелле тайкаланнăскер,
Ђынлăн хăнана пуç тайма шутларĕ.

Лăпкă йал хушши ĕçкĕ-çикĕпе
Туй шыљăк ђухне улшăнайнă пек,
Пĕр самант хушши хĕп-хĕпĕртĕкех
Кўршĕри вăрман улшăнса çитет.

Хула йанравне уйавлă кунсем
Мусăк калани ўстерне пекех—
Вăрман кайĕксем сассене çĕклеç
Купăсçăпала шăпăрçă пекех.

Шап-шур хурăнсем, туйарăмсемле,
Тумланса пĕтнĕ, йакалкалаççĕ;
Лăпкăн йурласа çулçийĕсемпе
Ал çупнă майĕпе авкаланаççĕ.

Авă, ăвăссем, туйађисемле,
Ђарнаймасăрах шăкăлтатаççĕ:
Çилсĕр-мĕнсĕрех аллисемпеле
Шарт-шарт! тутарса сасă тăваççĕ.

Йамшăка килнĕ вăй-питти çынла
Патвар йумансем тăраççĕ хусканса;
Ђынлă вырăнти хура хăталла
Ђăрăшсем лараççĕ сухал каçăртса.

АЂапăЂалла, путрус йăвăçсем
Шĕшкĕсемпеле туй-шыЉăк кураççĕ;
Лутраскерсеннех çӳлте куçĕсем—
Мĕн пурĕ харпăр-майĕ йанрама пуçлаççĕ.

* * *

Кĕтнĕ хăна та хашлатса çитрĕ,
Мĕн пур таврана тĕтĕмпе витрĕ:
— Тавсийе! тесе хыттăн каларĕ,
Хирĕç туй-халăх тăрса пуç тайрĕ.

Çĕн хăна çитсе пуç тайнă майпа
Туй шыЉăк йанравĕ çухалсах ларать.
Мĕн пур туй-шыЉăк пĕт пĕтĕм пулса
Хăна йенелле çаврăнса тăрать.

Пит хăвăрт килсе ăш пиçнĕ курнать,—
Хăна лашинЂен тăр кăпăк йухать.
Кĕреке умне вăлă Ђаранать,
Курка тытса тек çипуçшăн пулать.

— Пуйăс килЂ, пуйăс!.. Вăрлăхпа пулас,
Хăш стантса ваЉЉи,—кайса пĕлер-ха.
Вăрнар тӳпи те пур пуЉ-ха—вулас,
Вакунсем çумĕпе утса çӳрер-ха.

Пуйăс çитсе ЂаранЂă Ђаранманах
Мĕн пур пек халăх савнăçа ӳкрĕ;
Инкек аллине... ӳкнĕЂЂĕ хуйха...
Вилĕм куç умнЂех хĕрсе ĕç тытрĕ.

1922-мĕш çул.

# КУЛӐШ ЙУРӐ-СӐВӐСЕМ

## ТӖШТЫРПИ.

(Йӗпҫӑмах такмаксем)

Йанрах, кармуђ, хыт йанра,
Ес хаљ—уллах пуҫӗ.
Типшӗм Тимкка санпала
Ђӑн уллаха уҫӗ.

Малтан нађђом хамӑртан
Молотошлӑ пултӑр:
Йунӑшӗски шӑлтӑрма
Ҫак ҫурта тӑк тултӑр.

Йатӑм рађшӗ пыл Йӑван,
Хрансус пыл тӑк Шанђђӗ.
Комрат йухнӑ хытхуран,
Как, леш, ҫеҫпӗл шаннӑђђӗ.

Тӗштырпи хаљ, Тӗштырпи
Еп комсомол ҫынӗ,
Во вҫом мирӗ тӑван тин
Пролеттарски кимнӗ.

Тӗштырпи еп, Тӗштырпи—
Ђӑваш комсомолӗсӗ.
Кив кункрарах выртӑп-и?
Ҫумра Ленин лосӑнкӗ.

„Телӑ пылӑ в Октӑпре,
Пылӑ, ой, каккойски,
Ӑҫтан йултӑр покрӗпре
Пыл катка пуршуйски.

Çĕнтертĕмĕр пуршуйа,
Вăрçнă капиталпа;
Хаљ о пылом спойу йа,
Калап кармуђпала.

Тĕштырпи еп, Тĕштырпи,
Типшĕм Тимкка ывăлĕ.
Кив кункрарах выртăп-и?
Манăн пашка сыв вĕт.

Ни вырăс еп, ни ђăваш—
Хама хам не снайски!
Йе урахxăл, йе йăваш
Микул тур пыл, снамăски.

Киреметпе турă пĕр,
Ти-ри, ти-ри, там-там!..
Текех ђирке çўреппи-и?
Çўремĕп нихçан та!..

Типшĕм Тимкки тикки пыл,
Неснай как порнахxăл.
Ырçын кулнă, кулнă пуп,
Йăпăлт улталахxăл.

Тинкĕл-тенкĕл! ђан çапса
Пăхăнтарат̆ пупĕ:
Упаленсе пуççапса
Аллăма ђупту, тет.

Саплаткăм çеç пурнăçу
Мăнтăрсен пиншакĕшĕн;
Хăйсем тăрăх йухат̆ çу,
Татах йун çăтасшăн.

Ай-йай! полђнă йăвăрђ шиçђ,
Вstartсах та улахxăл.
Каçпа çапах кĕрт-йыттин
Йăрт-йăрт!.. по улахxăм.

# ТАСАТУ.

(Çĕнĕрен те çĕнĕ романс).

Тасату хуйхи пит те пусса килсен, çак романса йурла та, ăшђик лăплансах кайĕ. Романсне йурланă ђух ђунтан-вартан хурланса йурлас пулаť. Кĕвви—„Капкăнра".

Ах, тасату, тасату,
Ђун сиктермĕш тасату;
Тăпра катĕк пулсассăн,
Катăттăм та ывтăттăм.

Ах, тасату, тасату,
Кўрентермĕш тасату;
Кўллен ђĕк шыв пулсассăн,
Витрен-витрен тăкăттăм.

Ах, тасату, тасату,
Кун хупламĕш тасату;
Хупламипех каçарсан,
Хамах ђуста çăрăттăм.

Ах, тасату, тасату;
Сехре хăппи тасату;
Çĕр тенкĕллĕх поттелкка
Пĕр пин парсах çурăттăм.

Ах, çунатăм, çунатăм,
Сана кассах татаçшим?
Маттур çунат хушăттăм,
Măриккан хуçи пулăттăм.

Ех, хурђкасем, лĕпĕшсем...
Есĕр пурте вĕçеттĕр,
Тасату умĕн пулсассăн
Ăçта çитех тарăр-ши?

Ах, Маруççăм, ђеђексĕм,
Шăккулатсем ĕмнĕскер,
Тасалса-мĕн тухсассăн,
Кам ђĕрçине ларăр-ши?

Ах, тасату, тасату,
Ђун сиктермĕш тасату;
Тăпра катĕк пулсассăн
Катăттăм та... ывтăттăм.

1929 ç.

## ÇАВĂНĂÇЛĂ КĔВВЕ ТАРĂХНĂ САСĂПА.

Елĕк районĕнђи Тимĕрç-кассинђе Уçăп Йăванĕ раскулађђăт тăватпăр, тесе, хăраса, Лаврентти Матвин хĕрне ирĕксĕр кађђа илесшĕн пулнă. Хĕрĕ ђасрах кађђа тухса кайнă. Уçăп Йăванĕнсем тарăхса çăварни ђухне йулташĕсене ĕçтерсе ўсĕртнĕ те, кађђа кайнă хĕрĕн упăшкине тытса хĕненĕ.

„Раскулађђăт“ тăвасран хăраса Петĕр Ларивонђђăпа Куçма Çеменђђăн ўссе çитмен хĕрĕсемех кађђа тухса тарнă. Уçăп Йăванĕсем йалти хĕрсен „класне“ çапла тĕппипех пĕтересшĕн („Йал кађђи“ çырăвĕнђен).

Çав çав çĕрте, çав çĕрте
Уçăп Йăвађ пурнаť, тет;
Кађђа пыман хĕрсене
„Раскулађђăт“ тăваť, тет.

„Раскулађран“ хăраса
Хĕрсем тухса тарђĕçĕ;
Уçăп Йăвађсем тарăхса
Рыђак тытса ларђĕçĕ.

Çав çав çĕрте, çав çĕрте
Уçăп Йăвађ пурнаť, тет;
Колхос тăвас ĕçе те
Расколхослап епĕ, тет.

## „В КОЛХОЗ“ ÇЫРĂНАП, ТЕСЕ...

(„Проводы“ кĕввипе)

Çĕн Вăрман йал (Канаш р.) комсомолĕсĕ Йăван Йаккăвĕ колхоса çырăнђĕ. Ĕнесем ахалех колхоса кайаççĕ тесе, çырăнсан тепĕр куннех икĕ ĕнине те пусса пăрахрĕ. (Ваççилккин).

„В колхоз“ çырăнап тесе
Тухса утрăм,
Тӳрех икĕ ĕнеме
Тытса пусрăм. | 2 хут

Йакку Йăванђ кăмсамул
Колхосланђĕ-ĕ...
Пример љупой мйаçниккум
Ођко пађĕ. | 2 хут

## ÇĂПАТА, ÇИЂĔ МĂШĂР ÇĂПАТА.

(„Çăпата кĕввипе“).

Тимĕрç-кассинђе (Елĕк р.) пĕр çынăнне çиђĕ мăшăр çăпата раскулађђăт туса кайнă. Ку ĕç маçтăрĕсем—Уçăп Йăванĕ, т. ыт. унăн йулташĕсем. (Çыруран).

Тимĕрç-кассин лаççинђе
Колхос тунă каççенђе
Тухрăр есĕр кулаках.
Уçăп Йăвађ хушнипех.

Çăпата, çăпата,
7 мăшăр çăпата.
Хуçи тухрĕ кулака-а.
Çăпата-а-а! Çăпата!

# КУЂЂЕНЕÇ.

Калама çук, Паçук пиђђе,
Пирĕн çак йал тĕттĕм;
Кашнă краштăн лаççинђе
Мăкăрланат тĕтĕм.
Ах! ах! Çырлахах
Мана туйантарђĕç.
Тĕттĕм çĕрте ĕçне ту та,
Çакна туй, ан тар! теç.
«Тĕттĕм» тесе çăвар уç—
Шăммусем те йулмĕç.
«Çутти» пур, тет пирĕн йал пуç
Çататлă Çимунĕ.
Ах! ах! Çырлахах...
Лаçсем тăрăх хăй çӳрет
Тупăшлу çĕклесшĕн,
Çутти мéнне вăл пĕлет
Ушкăнпах „ĕçлесшĕн“.
Ах! ах! Çырлахах...
Тунма хал çук, Паçук пиђђе,
Епĕ хам та мур-ĕç.
Хамах кайрăм, ĕнсем çинђе
Лайăх туйах турĕç.
Ах, ах, çырлахах...
Хĕрарăмсем ку хушăра
Малтан-мала куçрĕç:
Çăл кутĕнђех çтена хаçађ,—
Хыпар штапĕ уçрĕç.
Ах, ах, çырлахах...
Савни туп та, лаçна ут уш—
Савнисем хаљ кунĕ,
Витресенђех шывпа хутăш
Алимент саккунĕ
Ах, ах, çырлахах...
Ађи-пăђин оркспосопнăç
Пит те, пит маттур-ĕç,

Йалти улма пахђине вăç
Йĕтемпе пĕр турĕç.
Ах, ах, çырлахах...
Хай ман хĕр ĕç витре çинђен
Çутталла çул уçрĕ,
Икĕ ђетвĕрт лаçăм йенђен
Йĕтем хыçпе шурĕç.
Ах, ах, çырлахах...
— Ах, тăвариш Çемен Хветĕрђ,
Санпа ман кăшт ĕç-ђĕ:
Сан йатупах тулђĕ ђетвĕрт,
Хапăл ту кăшт, ĕçђĕ.
Ах, ах çырлахах...
„Хветăрђђăсем“ тăрса тухса
Алла „çĕн ĕç“ тытрĕç:
Алтăртанах сыпкă сыпса,
Йăвантарђĕç сырткăç.
Ах, ах, çырлахах...
Ађи-пăђи персе çитрĕç—
Туйшăн тунсăхланă:
Пиђђе, санăн тата иккĕш
Сунгăхран пушаннă.
Ах, ах çырлахах...
— Çемен Хветĕрђ (ĕçне) сӳнтермесĕр...
Пиђђепе хăт талђĕ:
Икĕ питме йенђен-йенне
Çап-çут сутăлтарђĕ.
Ах, ах, çырлахах,
Калама çук, Паçук пиђђе,
Хаљ çутта еп пĕлтĕм.
Пайан кун та йалăм çинђе
Тĕлкĕшет ман питĕм.
Ах, ах, çырлахах,
Мана туйантарђĕç.
Ĕмĕр манми куђђенеç—
Алименг тытгарђĕç.

1928 ç.

# АХТӐТОР.

(*Кӑмӑллӑн тӑрӑхласа ҫырнӑ ҫулйӗр ђастушкисем. Хыпарсемпе малтанхи сӑввине куласа каламалла, ыттисене йурлама пулат*).

Ђӑваш респуплӗкӗнђи Ахтӑтор пуҫлӑхӗ Унтри Унеҫӗмӗ ђухӑнсен конферентсинђе пысӑк сӑмах тухса каларӗ. Ахтӑтор пуҫлӑхӗ пур, орканисатсийӗ ҫук, вӑл пулмаллах.

— Ҫулйӗр пулман пирки, Улатӑр йенђе пӗр сӗт-турӑх ертелӗ пӑђланнӑ, тет.

— Пайторкпа Ђӑвашсойус Канашпа Шупашкар хушшинђе ҫӳреме 2 автопус тата 1 крусовик илеҫҫӗ.

Анђах ҫулӗсем... (Хыпарсенђен).

Ай-хай, ҫулӗсем те-ҫке пирӗн, ҫулӗсем, йӗрӗсем..
Инкек-ҫке! Ай-хай, ҫырлахтӑр, вахтӑрах-тӑ турӑ!
Ҫулсемех хываҫҫӗ тӑр ђӗрере
Темӗнле мӑнӑ та хулӑм сасӑсем:
— Ҫӑлӑнӑҫ пурах, пур, тет—
Тытса ђараймийех ҫивђӗ пулаť, тет
Унеҫӗмӗн ҫулйӗр Ахтӑтурӗ.

Ай-хай, ҫулӗсем те-ҫке пирӗн ҫулӗсем—
Анлӑшӗсем вӗсен ик-виҫӗ ҫухрӑм та ҫурӑ;
Кашни ура та, ай, йарса пусмассерен,
Хура тинӗс пек хумханса йулаť шывӗ-шурӗ.

Хушса йурламалли:

| | |
|---|---|
| Ай-хай, мӑнтарӑн, | Ай-хай-йах та, мӑнтарӑн, |
| Унеҫӗм Ахтӑтурӗ, | Ђӑвашӑн шывӗ шурӗ, |
| Те пулаť халех у, | Те ђупайаť Ахтӑтурӗ, |
| Те пулмасť? | Те ђупмасť? |

Йуртсам, халӗ, утӑмҫӑм, йурт ес, йурт, хура турӑ ут,
Ҫакӑ тӑвӑр та ҫулсенђен тухса, ай, ҫитиђђен;
Кӳрсем, кӳр есӗ, Унеҫӗм! Туртса тух Ахтӑтур—
Утӑмӑрсем кӗрсе ӳксе те вилсе пӗтиђђен.

Ай-хай, мӑнтарӑн...

Ҫӳрен ҫеҫ-и? Кăвак-и? Турă-и ђăваш уђĕсем?
Пĕкĕрен те ҫӳлĕђђĕ-и ҫак вĕсен пуҫĕсем?
Пĕрререн пĕрре ҫеҫ ђăпта леҫрĕмĕр хулана—
Хăмăла тăрăнмаллах та-ҫке усăнђĕҫ утсен пуҫĕсем.

Ай-хай, мăнтарăн...

Леҫмеллеђђĕ хулана сĕт-турăх, леҫмеллеђђĕ—
Ҫуна ҫулĕ пуласса кĕтсе, ай, тăтăмăр,
Пĕтмеллехђĕ те пулĕ ушкăн, пĕтетехђĕ—
Ахтăтур пуласса кĕтсе, ай, тăтăмăр.

Ай-хай, мăнтарăн...

Шупашкарăн та-ҫке кĕселленнĕ лăђ-лађ!
ҫапҫут лăкăрĕ,
Миҫе калӳш кăҫал вăл тытса та ай хыпрĕ пуђ?
Ахтăтур та пырас ҫулăмăрсем ҫинђе пурĕ
Миҫе ут кăҫал путса та, ай, хытрĕ пуђ!

Ай-хай, мăнтарăн...

„Ахтăтур“ тенĕ сасăсем пуҫ ҫине ӳкеҫҫĕ:
„Ҫулйĕрсем пулмасассăн сотсиалисăм ҫук мар-и?“
Ахтă тă пуссем килсе тулаҫ, тет, утйĕрсем пĕтеҫҫĕ.
Ут йĕрĕсем ҫинђен тепре те йурласа йулар-и!

Ай-хай, мăнтарăн...

Ай-хай, ҫулĕсем те-ҫке пирĕн, ҫулĕсем...
Ай-хах! Ҫырлахах тăр, вахтăрах-тă турă;
Пулаҫҫех,—йулаҫҫех пулĕ та-ха йăвăрлăх ҫулĕсем—
Килейсе те ларинђђĕ ђасрах ҫулйĕр Ахтăтурĕ.

Ай-хай тă! Мăнтарăн Ђукунҫулăн пулĕ ҫулĕ—
Унеҫĕм паттăр Ахтăтурĕ Пăравус пек те ђупĕҫĕ
Пуласса пулаť та-ха у, тимĕр уђĕсем
Ун?.. Пулми мар!.. Тыт та лар!
Анђах пайан мар...

# САМОКРИТТĔК ТАКМАКĔСЕМ.

Нăрт-нарт! автопус—
Шупашкартан Канаша.
Васках хыпар, çитсе пус
„Капкăн“пала „Канаша“.

Çул тăршшипех ана-ана
Автопусне тĕкрĕмĕр;
Самокри-и-ттĕккăна
„Пурнăçнелле“ кĕртрĕмĕр.

Кăштăртатать Атăлĕ
Шывçунасем кÿресшĕн,
Хыпаланать Ахтăтур
„Ăйăрçуна“ кÿлесшĕн.

„Ăйăрçуна“—çил çунат
Автопуспа пĕр tăван;
Волоккитпа пÿрократ,
Тем кала та, пĕр тăван.

Волоккитне тыллама
Тимĕр тылă илтĕмĕр,
Пÿрократне аллама
Тимĕр ала илтĕмĕр.

Илес, терĕм, кирлĕççĕ—
Хура хурçă хаççăм пур,
Хаççăран та çивĕççĕ
Самокриттĕк, есĕ пур.

Каççин-каççин каçакин
Каçман карта çук та-тăр,
Самокриттĕк икреççне
Кам астимен, хатĕр тăр!

Ват хурама силленет
Вӑйлӑ ҫиле сиссессӗн,
„Ђул ҫамкара“ ҫил вӗрет
Тасатӑва!.. тесессӗн.

Шур ђӑланта шур сехет
Ҫапас вӑхӑт ҫитрӗ пуљ;
Шур охвитсер, сан ђерет—
Сирпӗнессў ҫитрӗ пуљ.

И-и! Мускав кађђисем,
Пӗлӗтре-и пуҫӑрсем?
„Ђӑваш хуҫалӑхӗнђен“)
Илӗнђӗҫ-и куҫӑрсем?

Сакӑр шӑллӑ урапин
Кўпђӗк хушши йакалнӑ.
Пирӗн каҫҫир кӗсйисем
Супровккӑпа йакалнӑ.

Вӗлтӗр-вӗлтӗр, вӗлтӗркки
Ҫил ӑҫталла,—унталла.
Сашђитнӗксен хўтлӗхӗ
Ӑҫта укҫа,—унталла.

Ђӗрик-ђӗрик урапи
Тикӗт сӗрмен тейеҫҫӗ.
Ӗҫў мӗншӗн тухаймаст̆?
— Ҫуне кўмен, тейеҫҫӗ.

Нарт-нарт кӑвакал
Лапри-ҫӗпри тиркемест.
Пирӗн КОРППО ҫавнашкал
Ҫӗрӗк-марӑк тиркемест.

Салакайӑк пӗҫҫисем
Тарса кӗђӗҫ кӗлете;

*) Кулакла шухӑш пиђетленӗ «Чувашское Хозяйство» шурнала каланӑ.

Сала ёни сĕҫĕсем
Хакне пеҫĕç пĕлĕте.

Ҫăх-ҫĕп сойус ҫăххисем
Кик! терĕç те, как! терĕç,
Çуртран çурта куçса та
Укрĕ-и-ха хак? терĕç.

Вăрман урлă хурт кайрĕ
Йуман хăвăҫ шыраса,
Рапшилкопра хал кайрĕ
Рапоҫҫисем шыраса.

Вăрман—ылттăн... тейетпĕр,
Лосункĕсем аллă та,
Вăрманçисем, тресĕсем
Вăрман мĕнне маннă та.

Ҫăрт!-ҫăрт! сăран атти
Темле усра—виç çуллăх,
Интустрийă сайомĕн
Куппонĕсем вун çуллăх.

„Анкĕлиски скарухxут“
Çап-çут çунат урара;
Сайом вĕçрĕ пулнăй хут
Пĕрҫĕ йулми панккалла.

— И-у! терĕç ёнисем...
Сăрхăнмаççĕ сĕҫĕсем.
И-и! терĕç шефĕсем
Курăнмаççĕ ĕçĕсем.

Е-ей! Пирĕн пахҫана
Çăхан йăва çавăрнă;
Мами совхосне пăхма
Улпут йăва çавăрнă.

Хура лаша, тейейсе.
Ытла йăвăр ан тийĕр;

Витвишентсă, тейейсе,
Халех пусса ан çийĕр.

Ы-ый! Хурђăка есрелли
Ђĕп çĕклеме вĕреннĕ,
Ы-ый! пўрократ есрелли
Вытвишентса хĕстернĕ.

Хурђăкасем савнасси—
Ђĕпсем ўссе çитиђђен,
Пўрократсем асасси—
„Шур çурт“ мĕнне пĕлиђђен.

## ХĂНКĂРМА.

(„Шандарба“ кĕввипе йурламалли
такмаксем).

Туљђи-иљђи, туљђи-ђуљђи,
Йурри-кулли умам тулли.

Хăнкăрма алла илтĕм,
Хăнкăртаттăр тесе.
Кўптĕрме кўпсе килтĕм
Кĕттереттĕр тесе.

Туљђи-иљђи...

Пухха!.. Пухха тухрăн,
Ик çĕр выртăн.
Ыйту?.. Ыйтăвĕсем
Икçĕр вăтăр.

Туљђи-иљђи...

„Капкăн“ çинђен акă
Ыйту лартрăм,
Мĕн пур йăхă-йаха
Çаклатайрăм.

Туљђи-иљђи...

Çĕнйал*) йалсоветĕ
Амăртатăп, тет.
Ĕçе çĕрĕн-кунĕн
Ђăмăртатăп, тет.

Туђђи-иђђи...

Йуррисем пурри пур,—
Итлекенĕ çук;
Çексийĕсем пурри пур,
Еçлекенĕ çук.

Туђђи-иђђи...

Пушар трушинĕсем
Пурри пур, теççĕ,
Анђах**) трушиннĕксем
Ĕçлемеççĕ.

Туђђи-иђђи...

Ишлей-Покровскийĕн
Илем ăçта?
Хосçпирт макаçăнне
Ђикĕн пуçна.

Туђђи-иђђи..

Хусантай Хĕлĕпĕ те
Арман тытаť,
Кулаках ан теђђĕр, тет,
Ђулне çураť.

Туђђи-иђђи...

Канаш стантси стройкки
Хăђĕ те çук:

---

*) „Çĕнйал" выраннe „çак йал" теме йураť, йурланă çĕрте хăйсен йал йатне каласан тата аван.

**) Йал йатне калама йураť.

Пуђнитса туса хунă
Никĕссем çук.

Туђђи иђђи...

КОРППО шăлнĕ текен
Райппосенђе
Кушак кайакĕсем
Портфĕлсенђе.

Туђђи-иђђи...

Кишĕр-хăйар
Пĕртте пулман,—
Лексийĕ пулнă хăйăр
Акрумунăн.

Туђђи-иђђи...

„Тетсен" мăн çăмхийĕ
Ђупма ђупат,
Ана салтса пуххи
Ире йулат.

Туђђи-иђђи...

Хăнкăрма алла илтĕм
Хăнкăртаттăр тесе,
Кӳптĕрме кӳпсе килтĕм
Кĕттереттĕр тесе.

* * *

Туђђи-иђђи, туђђи-ђуђђи,
Йурри-кулли умăм тулли.

„Капкăна" пайан лекрĕ
Пысăк кашкăр.
Хăнкăрмам лайăхрах та
Хăнкăртаттăр.

Туђђи-иђђи...

„Сулахай“ йенне, тет, вăл
Сулăнасшăн;
Сылтăм ĕçсене те
Çулáхатăн.

Туљљи иљљи...

Ђăваш хуçалăхĕ
Хыткан, терĕç
Елменсем: ђăваш, ĕнтĕ,
Путланђ, терĕç.

Туљљи-иљљи...

Шупашкар йалавĕсем
Фактпа пеђĕç,
Елменсен сăмахсене
„Ман мар“ терĕç.

Туљљи-иљљи...

Самани сылтăма-и
Ђакса тухрĕ,
Кулака ал-урипех
Çапса хуçрĕ

Туљљи-иљљи...

Йуман терĕ-и çав
Пирĕн „пăта“?
Çавăнтан çыхаŏ пăйав
Елмен хăта*)

---

*) «Чувашское хозяйство» шурналăн 3—4-мĕш №-рĕн ум статйинђе: „ђăваш хуçалăхĕ кайалла ђакаŏ, «октăпĕр револђутси те ђăвашсене нимĕнех те памарĕ», ђăваш хуçалăхне йуман çех çăлса хăварма пултараŏ, тенĕ. Çав „пăтаран“ йарса илсессĕн çеç пирĕн кайалла ђакса пыракан пурнăç урапине ђарма пулĕ — статйан тĕп шухăшĕ çавăн пек.

«Туповăйла»
Проплемăсем
«Шивотнăйла»
Пиђ йенĕсем

Туђђи-иђђи...

«Корпаттовскисем» хађ
Йуманĕсем,
Вĕсен пуçанисем
«Йоркширскисем».

Туђђи-иђђи..

Хăнкăрма алла илтĕм
Хăнкăртаттăр тесе,
Кўптерме кўпсе килтĕм
Кĕттереттĕр тесе.

* * *

Кармођ аллăмра ман
Икĕ ĕретлĕ;
Çейăлкки шефсем пани
Вунпĕр ĕретлĕ.

Туђђи-иђђи...

Тымар çимĕç лартар
Уйа тесе,
Вăрнар-Хапăс тăрăх
Лосăнк пеђĕç.

Туђђи-иђђи...

Савни, мĕнха, терĕм,
Ђимха! терĕм.
Атта, çав колхоса
Кĕрер, терĕм.

Туђђи-иђђи...

Тухсан,—каҫҫа тух ес
Ҫӗрпӳ йенне;
Унта колхосланаҫ
Районӗпе.

Туҫҫи-иҫҫи...

Камах тата сана
Хуса тухрӗ?
Кулак аҫипеле
Туртса ҫыхрӗ.

Туҫҫи-иҫҫи...

Упӑшкам—комунис,
Еп хам песпарттейни,—
Ҫавӑнпала пурӑнӑҫ
Пит те каниттелни.

Туҫҫи-иҫҫи...

— Аҫа, старикӗм те,
Киле кайар,
— Ҫим ха, карҫӑкӑм, теп,
Ҫӗлӗм ҫӗртем...

Туҫҫи-иҫҫи...

Ик-виҫ ҫӗптӗмех, тет,
Шухӑшӑмӑра
Самокриттӗккипе, тет,
Ҫӗртсе хурар.

Туҫҫи-иҫҫи...

Ҫырӑнтӑмӑрах вӗт
Колхосне те,
Капла кӗрӗпӗрех
Парттине те.

Туҫҫи-иҫҫи...

Ам-ме... Америкпе
Халха йӳҫрӗ:
Пирӗн те «америклӗх»
Ҫӗмӗрле куҫрӗ.

Туӗӗи-иӗӗи...

Таҫтах тухса вӗҫрӗҫ
Христуспа ӗурт,
Пупсен ӗиркӗвӗнӗе
Вулавлӑх ҫурт.

Туӗӗи-иӗӗи...

Хӗрӗх виҫҫӗнеллех
Ҫитсе ӳкрӗм,
Ҫапах сиккипелех
Шкула вӗҫрӗм.

Туӗӗи-иӗӗи...

Хӑнкӑрма алла илтӗм
Хӑнкӑртаттӑр, тесе,
«Капкӑн» ҫырӑнса илтӗм
Ӑс парӑӗ вӑл тесе.

---

*) «Америклӗх»—лайӑх, ҫӗнӗ машшинсемпе ӗҫлеме тытӑннине «америкленни» теҫҫӗ. Ҫӗмӗрлере ҫӗнӗ машшинсемлӗ савӑтсем лартнине калана.

# ПАРОТИСЕМ

## КАЙАХ, ӐРСАЙ, КАЙАХ...

(Рсай поета хисеплӗн тӑрӑхлани).

Кайах, Ӑрсай, кайах ҫав Кавалтан*),
Купӑс тӑс та, кай ыранах ҫак ҫӗршывран.
Аҫу йулаҭ, йулин- -йутлаш унпа,
Сулах ална: пурнаҭ...
Ђакӑр пӗлӗт йепле ырхан,
ҫапах пурнаҭ.

Виҭҭа, аҫу ҫинђен тек ан та калаҫ,
Ҫӗнӗ тӑванусем ҫӗлен пекех авкаланаҫ.
Авӑ хӗвел – ҫуталнӑ улма—
санӑн куму:
Ҫӳлте уйӑх кулса шӑваҭ—
ула тусу.

Ирӗк сӑвӑҫ пулса йурлас тесен,
Ула уйӑх ҫине улӑхтӑр етем.
Ҫут ҫӑлтӑр пек
Йӑл-йал! тукаласа
авкаланар;
Хӗвел патне вӗҫсе
уйӑх урлӑ
куҫҫуљ тӑкар!

Хура кӗсенлӗ йал... Мӗн пур унта?
Йӑмри те йӑванаҭ йӗрсе пӳрт ҫине...

*) Кавал—Рсай ҫуралнӑ йал, Вӑрмар районӗнђе.

Пăхсам, амĕш, ађашланса пăхсам,
Мĕн-ма йĕрен? Мĕн ма?
Йуратнă ывăлу купăс тăсаť
уйăх çинђе.

Ыран ирех кин кĕртĕн ес, кинў—хĕвел.
Кайăн хăнана çўле, хăтусем патне;
Ывăтса йарăн тасталлах çĕлĕкне,
Асамне те ывăтăн сырана.
Лăђ лађах! сурăн çĕр мунђа çине.
Кăна кура
Тĕлĕнĕ тăмана.

Уйăх çинђе хађ ўкрĕ шурă тăм,
Çапах та йурлап, тет,—савăнтăм:
Выртас темерĕм, тет, шурă лупашкара.
Шупашкара
Хăвартăм та шурăм,
Халĕ тĕлĕнсе итлет, тет, ăна
тăмана.

Çуталнă улма çĕре татăлса ўксен,
Вырма пĕлми çурла та анĕ пĕлĕтрен.
Уйсем тăрăх ђĕкеç майлă
Вĕçĕ Виťťа.
Кашни касах йурă йурлĕ
çунат çапса.

Кайах, сăвăç, кайах çăва патне,
Унта хумлă илем, унта атте...
Ађа пекех ађашланса
Ђĕрем çунаť,
Ĕмĕт ĕмсе, авкаланса
Мĕлке ђупаť.

1926 ç.

# ШЕЛЕПИ (УÇ).

(Н. И. Полоруссăва тăрăхлани).

Ку сăваçсем çĕр çине
Ăçтан тапса тухрĕçĕ?
Ну, хăйсем те... сăмах хутаçне
Йепле кăна тупрĕçĕ.

Ех, Шелепийĕн хутаççи—
Мĕн-мĕн кăна çук унта?
Кам пайласа çитерес
Ку хутаçри пурлăха?

Çу пек çемçе кунĕсем,
Ђăл-ђăл пăхан куçĕсем,
Лăх-лăх, нăш-нăш кулăсем
Тимĕр тупă Елменсем.

Йăл-йăл выљанан хĕвел çийĕнђе
Ылттăн Микули ђунĕсем,
Сăмахсем суйлакан ђĕлхеçсем,
Çур ђуна çунтаран Ђĕкеçсем-мĕнсем.

Тăпăр-тăпăр тăпăрђăк,
Урай хăми сăпăрђăк!..

Йĕкĕр-йĕкĕр ђĕрне вĕççĕн
Ах, турă!
Урам тăрăх кĕр-кĕр-кĕр...
Тур çырлах!..

Ак, ĕнтĕ шкулă,
Ак комун пахђи.
Ђеђексем тулăх,
Йан та йан сасси.

Вĕçсе ӳкĕттĕм Мускав хулине
Вутлă çулăмлă ĕçе вĕренме.

Мускавĕ те илĕртет,
Сăвăсем те выҫантараççĕ.

Ваттăм та çитет,
Сухалех те ÿсет.
Çамрăксем çапах
Йашăлантараççĕ. 1927 çул.

## ШУПУÇÇЫННИНЕ (Н. ВАÇÇИЛЙЁВА)

Литтераттур ĕçĕпе 20 çул ĕçленине
асăнса йуратса тăрăхлани.

Ҫуп-ҫуп, лашам, ҫуп, лашам,
Çав Шупуçне çит, лашам,
Шупуçĕнҫе ҫăптаç пур,
Ҫăптаçăсен сăвăç пур.

Трелле-ле-лле! Ĕçлĕр пĕрле,
Ҫăпташăн та тавтапуç,
Тĕнҫе çине ҫăваш йаҫĕ
Ҫăптапалах алăк уç!..

Çап-çап, ҫăваш, çап, ҫăваш,
Çапах, ҫăваш, ҫăптуна,
Мухтав, ҫăваш, ҫыс ҫăваш
Происвотствă сойусна*).

Çармăс, ҫармĕç тет пулас,—
Илет ҫăваш йăлăмне;
Ҫыхăнаттăр, йулташсем,
Терĕм ҫăптаç йаҫĕпе...

Ҫăпта ашшĕ,
Ашăк хуçи—
Мухтав сана,
Ыр Шупуç.

*) Н. В. Шупуççынни Происвотсойусра ĕçленĕ.

Ђăпташăн та,
Пĕр пусшăн та
Ђăвашсенђен
Тавта пуç.

Уйран тырпул пухса кĕрсен
Ђăпта ĕçне тытатпăр,
Хĕл-хĕлĕпе тусан ĕмсе
Ђаххуткăна туртатпăр.

?

Ђăпта çапса, ашăк тĕртсех
Çармăс çине тухмалла,
Пурçăн укçа хутаç тĕпне
Сум никĕсне хумалла.

Итле, сăвăç, пуçна ан тай,
Ђăптаçсем мах парас çук.
Кӳршĕ сутăç Марттыновски*)
Сăра сутсах пуйас çук.

Ђăпта йăтсах вилмешкĕн те
Хатĕрленсе тăратпăр.
Ђăптаранах вывескăсем,
Тупăксем те тăватпăр.

Савăн, ђăптаç,
Ху йуррупах,
Пурте сана
Мухтаççĕ.

Шăлт-шалт! Шăлт-шалт!
Ђăпта çапсах
Санпа пĕрлех
Йурлаççĕ.

Мускав. 1926 ç.

---

*) Марттыновски Ђăвашсойусра ĕçленĕ.

# СЫВЛӐМ КАЙӐКӖҪҪӖ ЕПӖ...

(Поемӑ картишӗнҫе поет ҫунӗ туллашни).

„Поет“ йатлӑ ҫырма кӑмӑлланӑ поемӑн пролокӗ—умсӑмахӗ.

Сывлӑм кайӑкӗҫҫӗ епӗ
Сывлӑмпа нӳрететтӗм ҫӗреме;
Сывлӑмахҫӗ кӑмӑлӑм, ӗметӗм хисепӗ—
Унпалах ҫемҫететтӗм кӗввӗме.

Питӗ те аван-ҫке, аван ир ҫинҫе:
Сывлӑшӗ таса, ҫангалӑк ҫеҫен,
Хӗвел те йӑваш, аҫа амӑш пек,
Лӑпкӑн ҫех ҫӑваҫ ҫеҫек пит-куҫне.

Хӗп-хӗрлӗ ҫеҫек тулли питлӗ хӗр,
Йарӑм та йарӑм шӑрҫисем мӑй ҫинҫе,
Укапа кӗмӗл, ҫап-ҫут кӗмӗшке
Йӑл-йӑл-йӑл-л! тӑваҫ тухйи-мӑййинҫе.

Пи-ӑнк! пи-йӑнк! йарӑнаттӑн ҫӳлте, ирпеле,
Вӑштӑнах анаттӑн ҫерем ҫинелле,
Тутанаттӑн кӑшт ирхи сывлӑмне,
Сӗртӗнеттӗн ҫех те хӗрлӗ ҫеҫекне.

Ҫун-ҫӗрӳ тапраннӑ, куҫ-пуҫу вутла,
Йурласа саваттӑн комсомол хирне,
Хастар сас ҫӗнеҫҫӗ: Ҫамрӑк, ҫуп хутла!
Савнӑҫпа ҫӳхеттӗн Шупашкар ирне.

Ҫамрӑк ҫаршӑн, паттӑр ҫаршӑн ҫун уҫҫи—
Шӑранаҫҫӗ йурӑ, кӗвӗлеттӗн марш.
Пӑшалланҫӗ, хурҫӑланҫӗ хулпуҫҫи—
Сиксе тӑтӑр харӑссӑн! Хушу пулҫӗ: „Марш!..“

Асра та пулманҫӗ йынӑшу, салху...
Кӑмӑлна йӑпатнӑ КИМ палли хисепӗ.

Йаш ђух йашт! çӳрес—çĕклеттĕн хăна ху—
Сывлăмланнă сăвăпа çăвăнар-ха, теттĕн.

Çаплађђĕ ун ђух, ун ђух ђун сурман
Халĕ еп такам? Такам епĕ хаљ?..
Сăра-кассисĕр пĕр кун та курман,
Анђах çăмăл мар çав алăри куркам.

Ех, Шупашкарăм,—тус хулам!
Те сана, мурах, татах та ырлам?
Те, йенђен йен ик-виç хут çупкăлам?
Те мăнă хапхунтан пурнăçма ункăлам?

Ех, Шупашкарти сăра-касси, тавăрмак сăмса
Пăвасах тетĕн-и, тăван ывăлна?
Те, ырра сиссе кашкăрсем ӳллеç?
Савăнсах йĕрет кĕлмĕç кĕленђеç.

Шупашкар тусĕђђĕ епĕ,
Çак хула çеммиђђĕ кĕввĕмре.
Кăкăр ум тенки ун—КИМ палли хисепĕ,
Сывлăмлах сĕткенђђĕ çамрăк ђĕремре.

Ĕнер çеç çуллађĕ. Çуллахи хĕвел
Ђеђекпе выљађђĕ пахђана тухса:
Епĕ çамрăкђĕ—ĕмĕтсем вĕл-вĕл-л!..
Улăха тухаттăм купăсма туртса.

Пайан кам-ши? Кам-ши еп пайан?
Хăлăплахђĕ-çке, леш... телей аври;
Туртса çапăп та: Кай! Кай! Ес кулан мăнран,
Етем мар-çке ес. Ес—шуйттан, çырмари!..

Вун-вуник ђиркӳ, вун вуник пивной,
Шатах илĕртеççĕ-çке таçта, шăтăка...
Хăшĕсем карап тупнă: халлапри, леш, Ной
Йаранаť ђап çинђе. Сăра-касси поттопра.

«Сĕрĕмре» йăваланаť Митта,
Сĕлехине çуллаттараť йытта.
Лăх-лăх-лăх йĕрсе кулҧĕ Хусанкай:
Вaçанккаçăм, тет, кунтан ес ан кай.

Çавăнтах авă, çут уйăх кумине çĕтернĕ,
Кистенне шыран Рсайа палларăм.
„Папай ăна пайан сăра ĕçтернĕ,
„Ей, хурама“ тет вăл— „пул ман арăм“!

Йыттисем ҧылай, шатах ҧупкăнланаççĕ,
Хăр-хамах! сиксе туллаççĕ пĕр-пĕрне.
Ӳпĕнет стакканĕ. Сана ал çупаççĕ—
Авăрта есĕ. Йурă йурлап, тегĕн-е?..

Есĕ урăх хаҧ, çĕнĕ тумлă ҧун,
Папка çеç ҧĕрӳ... çурмалла ху вилĕ,
Çамкара ташлаť хура хумлă йун,
Илĕртег паçрах ахратсенĕн килĕ.

„Йăлтăр та йăлтăр хăмăр çут куçсем,
Ҧĕрем çине çеç тумлакан куççуҧ.
Кăрг-картах тапса инçете вĕçен кăмăл çунатти...
Çамкара есремет кăшăҧ...“

Йурлаť... Йурлатăп, тет те пулĕ ҧунтанах.
Çăханла пулин те, çухăраť, йĕрет.
Иш-ха, иш! теççĕ ăна. Çӳхе турпаспах—
Ун çине утлансах, мĕскĕн, тинĕсе кĕрет.

---

Раçăн Çтаппан сăрт çамки,
Йаштак топпăҧ—кăтра çӳç;
Пайан уртрĕ хăй çине
Майкăçланнă алшăлли,

— Ехмин! Ехмин! Анмастăн-и?
Намăса пĕлес! Çӳçӳсем ăçта?

Çамрăк ђун, поет, комсомолĕс!..
„Тăвансен масарне“ варалаťăн-и?

Ехминĕ анмасť. Шел мар-шим?
Хăй сăввине ункăлаť.
Утаманăн куç харши
Усăннăçем усăнаť.

Пурăнасђĕ санăн,
Астивесђĕ пурнăçа;
Кун çул хакне, илемне
Тултарасђĕ йурруна.

Ĕлĕк ик-виç сăнђăрпа
Тăллаймарĕç пирĕн ђуна,
Халĕ мĕскĕн алшăлли
Мăйкăçлаť-и ыр куна?!

Утаманăн куç-харши
Усăннăçем усăнаť,
Кĕлмĕçленнĕ çамрăка
Хытах, хытах вăл йатлаť.

Епĕ... епĕ те çавах-ши,
Ехминах-ши, тетĕп.
Пуçăма çимест-ши
Манăнне те сăра-касси?

Касмаллах касаť ак
Ђĕреме, сисетĕп—
Хайарскерĕн
Утаманăн сасси...

Епĕ... сывлăм кайăкĕђђĕ епĕ,
Сывлăмпа нўрететтĕм кĕввĕме.
Ун вырăнне халĕ сăра ĕçеп-и,
Сăра çех пулса лармĕ-ши ђĕремре?!

1928 ç.

* * *

(Еппилăкран).

Çук!
Сывлăм кайăкĕ те мар епĕ,
Сăра кайăкĕ те мар.
Пулсан пулап тупă, тар епĕ;
Ђĕрємре хурçă манăн,
Сăра мар.

Илĕртсеђђ³ç. Çĕнеймерĕçĕ „*miss*“ „тупа“,
Хыпса çăтаймарĕ мана „сăра-касси“.
Çакă самантра: „Йеççенĕн, нăй-нăй“,
„Сонет“, „стансă“, нăшкатăп“,
тесе ıармалла-и?

Çу-ук!
Пиăнк-пиăнк! мар халĕ,
„Сунтала“ шаккатăп.
Сирпĕнеççĕ ıавралла
„Колхос ађисем“, „Ахтăтор“, „Хăнкăрма“ сасси,

„Çире пирĕн йункштурм“. „Хастарлăх“ касси.
Шоççе хывса пађĕ „Октăпĕр çулĕпе“.
Комсомол хирне—кранитлерĕ.
Кĕрлеме пуçларĕ, тытрĕ çул патварăн
„Мăн Унеçĕмĕн пıттăр Ахтăторĕ“.

„Инçетрен, инçетрен „ирхи сывлăмла“
„Килмен-курман Шупашкарне“
„Ленина асанса“ „Çамрăксен сасси“
Вĕç ерсе çиттĕрĕ. Канашран
Сиксе тухрĕ Автопус,
Çунатланђĕ çилçуна—
Хурçă ут пуласса (вăл)
Йевитлерĕ.

„Ёнтĕ çил çаврăнаť, çил çаврăнаť,
Çĕмèртпе тупăлха авăнаť".
Кам та кам лараймав ким çине,
Авăрта турпаспа кам ишет,
Ехминла, мухмăрла...
Вăл путаť, вăл майне ункăлаť.

Епĕ...
Йеççенĕн та, Ехмин та мар,
Сывлăм кайăкĕ те мар епĕ.
Йуррăмсем манăн тупă, авăрланнă тар.
Ĕç санра, ĕççыньĕ, вулакан,
Тăшмансем пирĕн пĕр, тĕлле!
Умри Телейлĕхшĕн шăрпăкна ил.
Тиверт!
Ђĕрт те йар.

Кĕрĕслеттĕр туппăм, йанăратăр.
Хыптăр вут. Çунтартăр.
Мĕнпур най-най йăх-йаха,
Йулхава, тĕшмĕшлĕхе, пупа,
Ђуралăх çыххине тĕппипех
Лапђăтса шăлса лартăпăр.

# ÇЫРАКАНĔНЂЕН.

„Октăпĕр çулĕ“ спорнĕке кĕрекен йурă-сăвăсене епĕ вырăсларан куçарса, вырăсли йевĕр çырса, йе ђăвашсен авалхи йуррисемпе усă курса, йе вĕсен авалхи кĕввисем тăрăх çырнă.

Тĕнђери паллă мусăкçăсем те халăх кĕввипе нумай усă кураççĕ. Ђăваш композиттăрĕсен ĕçĕсем тăрăх та вăл лайăхах палăрать. Спорнĕке кĕрекен йурăсен сăмахĕсене (сăввисене) нумайăшне вĕсем ыйтнипе çырнă. Паллах, „кивĕ кĕвĕсем“ те çĕнелсе, çĕнĕ сотершанипе пĕр пĕтĕмлĕхлĕ пулса тăнă. Кун пек туни—тумĕпе натсиллĕ, ăшђикĕпе пролеттарилле искусствă тăвас йеннелле пĕр утăм йарса пусать. Анђах пролеттари искусствине (поеçипе мусăккине) çапла кăна тумалла теместĕп епĕ, ун пек шухăш та пађах пулман манăн.

Ђăваш респуплĕкĕ тăрăх мусăк прикатипе пĕрле çӳренĕ ђухне йурланă йурăсене, епĕ тухса каланă сăвăсене çырса илесшĕннисем нумайăи палăрђĕ. Çавнашкалах колхоссене, тата респуплĕк тулашĕнђи ђăвашсем патне кайсассăн та вĕсене кăмăлларĕç, кĕнеке кăларма ыйтрĕç. Сăвă-йурăсене (пуринђен ытла кулăшлисене) çырса илме хам пата пыракансем те пулнă, çырусем те ђылай йанă. Çаксене тата пирĕн массăллă йурăсăвă кĕнекисем çукпа пĕреххине асра тытса, кĕввисене вĕреннĕ хыççăн та тепĕр ђухне сăмахĕсене хут тăрăх вуласа йурлама кирлине кура, спорнĕке пиђете парас, терĕм.

Спорнĕкре çамрăксен массăллă йуррисем ытларах. „Паротисем“ тата „Сывлăм кайăкĕђђĕ“ йатлă сăвă сыпăкĕсем кăна йатарласах литтераттур тĕлĕшпе ĕçлекенсене вађђи çеç çырнă пек туйăнаççĕ Çапах вĕсем те—поетсене тăрăхласа вĕсен çитменлĕхĕсене кăтартса çырнăскерсем, пĕр поетшăн кăна инттереслĕ темелле мар.

Хăш сăвва мĕнле кĕнекерен, хăш автăрăнни тăрăх çырнине кăтартса пыман та, халĕ кăтартмашкăн шыраса тăраймарăм. Вăл-ку темех марха. Манăн çакна калас килет. Йурă кĕввисене „Сунтал“ „Капкăн“ шурналсенђе тупма пулать, йурă спорнĕкĕсене те кĕрсе пыраççĕ. Йурлаттараканăн çакна та астăвас пулать. Хăшпĕр йуррин 15—20 куплет. Пĕр харăсах вĕсене пурне те йурлама кирлĕ мар. Йурлаттараканĕ хăйне кăмăла килнĕ вырăнсене суйласа илме пултарать. Ф. П. Павлăв кармониленĕ „Пирĕн униђе“ йуррине Ђăвашсен патшалăх хорĕ авă 1—2—3—5—10-ш куплетсене çеç йурлать Ун ђулĕпе çитет те. Тата хăшпĕр йуррине йурлаканĕсем хăйсем патĕнђи хыпарсем тăрăх çĕнетсе йурлама та пултараççĕ.

## ТУПМАЛЛИ


ЙУРĂСЕМ — Стр.

Октăпĕр çулĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Аслă Октăпĕр . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Ленин . . . . . . . . . . . . . . . . . 6
Килмен-курман Шупашкарне . . . . . . . . 7
Ей-ну, йара пар! . . . . . . . . . . . . . . 9
Колхос йурри . . . . . . . . . . . . . . . 11
Совет ирĕкĕшĕн . . . . . . . . . . . . . . 12
Прикатă хатĕр . . . . . . . . . . . . . . 13
Колхос аҕисем . . . . . . . . . . . . . . 14
Сирĕн çире йункштурм . . . . . . . . . . 17
Кай, кай Ивана . . . . . . . . . . . . . . 19
Инçетре, инçетре . . . . . . . . . . . . . 20
Совет умми . . . . . . . . . . . . . . . 21
Комсомолккă Алтаҫҫи . . . . . . . . . . . 22
Хаçат çутти . . . . . . . . . . . . . . . 24
Ҕеҕен ҕунсем . . . . . . . . . . . . . . 25
Лапҕак пӳртре-и . . . . . . . . . . . . . 26

САВĂСЕМ

Çилтăвăл . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Ленина асăнса . . . . . . . . . . . . . . 29
Пуйăс килни . . . . . . . . . . . . . . . 31

КУЛĂШ ЙУРĂ-САВĂСЕМ

Тĕштырпи . . . . . . . . . . . . . . . . 33
Тасату . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
Савăнăçлă кĕвве тарăхнă сасăпа . . . . . . 36
„В колхоз“ çырăнатăп, тесе . . . . . . . . 37
Çăпата, çиҕĕ мăшăр çăпата . . . . . . . . —
Куҕҕенеç . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Ахтотор . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Самокриттĕк такмакĕсем . . . . . . . . . 42
Хăнкăрма . . . . . . . . . . . . . . . . 45

ПАРОТИСЕМ

Кайах, Ăрсай, кайах . . . . . . . . . . . 52
Шелеппи (Уç) . . . . . . . . . . . . . . 54
Шупуççынниие (Н. Ваççилйĕва) . . . . . . . 55
Сывлăм кайăкĕҕҕĕ елĕ . . . . . . . . . . 57
Çук (епилокран) . . . . . . . . . . . . . 61
Çыраканĕнҕен . . . . . . . . . . . . . . 63

Цена 45 коп.

Н. Васянка. ПУТЬ ОКТЯБРЯ

Чувашское Государствен. Издательство
Чебоксары — 1931 г.